**«Ĕç – пурнăç тыткăчи» пьеса**
Вылякансем:
Михаил Палччă- кил хуçи
Агриппина Ивановна – арăмĕ
Манюк – вĕсен мăнукĕ
Куçук – йытă
Маçук – кушак
Шăши
Сутуçă, Хĕвел, Çумăр пĕлĕчĕ

Çурхи ир. Пахча. Пахчара кӳлĕ. Михал Палччă йăпшăнса тухать . Ун хыççăн йытти. Куçук хаçат тытать те вуласа выртать. Михал Палччă вăлта ярса пулă тытма ларать. Агриппина Иванна тухать
**Агриппина Иванна:** Каллех ларать пулăра! Михаç, укçа тумалла!
**Михаç:** (шарт сиксе):
Шăпрах, карчăк, ан шавла!
Мĕн тăван-ха укçапа?
Пире пенси параç вĕт-
Вăл çăкăр илме çитет!

**Агриппина Иванна:** Ара, çăкăрĕ çине кăлпасси те хурас килет!
**Манюк:** Асатте, асанне! Мана кирлĕ çĕн кĕпе
Сапожки, туфли те надо!
Орифлеймовский помада!

Карăнса кушак тухать!

**Маçук:** Мяу! Мяу! Вискас çиес килет!
**Михал Палччă**: Прис кунтан! Патак лекет.

(Кушак карчăкки хыçне пытанать)

**Куçук:** Ман йăвана хăçан газ кĕртетĕр?
Е эп чирлессе кĕтетĕр?
Пурлă-çуклă укçана
Сыхлаймастăп эп вара

Кĕреçе йăтнă шăши тухать

**Шăши**: Çăкăр хытти кăшласа
Йăлăхтарчĕ! Кăлпасси, сыр
Печени е канихвет хăш-пĕр чух çиес килет!
Çав пулмасан ӳлĕмрен,
Тухса кайăп эп килтен.

**Маçук**: Ăçтах кайăн-ши вара?
**Шăши**: Кӳршĕре пурнать майра,
Ун пек пуянни сайра
Тухса кайăп ун патне!
Намăс пултăр-ха сире!
**Михал Палччă**: ( ĕнсине хыçса)
Акă ĕнтĕ тата

**Агриппина Ивановна**: Мускава сан каймалла
**Михал Палччă**: Мĕн тума?
**Агриппина Ивановна:** Стройкăна! Çуртсем тума!
(Йытă пуçне çĕклесе)
**Куçук:** Тӳлемеç унта укçа,
Ĕçлеттереç тарçăра-
Улталаççĕ халăха
**Михал Палччă**: Çууук! Каймастăп эп унта!
Хăвах кай-ха Мускавна.
**Агриппина Иванна:** Мĕн тума?
**Михал Палччă:** Ача пăхма!
**Кушак:** (Карчăк хыçĕнчен) Карчăк ĕнтĕ пит ухмах!
**Агриппина Иванна:** (чирленĕ пек туса) Ман сывлăх начартарах
**Шăши:** Атьăр çĕр улми лартар.Ăна ӳстерсе сутар!
**Агриппина Иванна**: Çĕр улмийĕн ĕç туллии.
Хакĕ пулĕ чăх кули.
Кишĕр шăтмĕ=ха çурри
Суханĕ – пасар туллии.
Сутăнмĕ пуль мĕн ӳсни.

Сутуçă сцена хыçĕнчен кăшкăрни илтĕнет:

**Сутуçă:** Сутатăп! Сутатăп!с Питĕ йӳнĕпех паратăп
**Манюк**. Помада пур-и?
**Агриппина Иванна:** Кĕрĕк тата?
**Куçук**: Пашал пур-и?
**Михал Палччă:** Вăлта! Вăлта!
**Маçук:** Вискас!
**Шăши**: Кĕр-ха, кĕр!

Пысăк кутамккаллă сутуçă кĕрет

**Сутуçă:** Пур ман лайăх вăрăсем
Тухăçĕ аван вĕсен
Пур голландский, пур китайский
Российскитй, американский.

Сире хакли е йӳнни?
**Пурте:** Лайăххи!
Сутуçă: Ку Раççей вăрри.
Ăна вăхăтра шăвармалла.
Сивĕрен сыхламалла,
Çĕрне кăпкалатмалла.
Удобрени памалла.
Вара тухăç парать вăл.
Е шăтмасан та пултарать.
**Пурте:** Кирлĕ мар(Çаврăнса тăраççĕ)
**Сутуçă**: (хыпаланса)
Чим-ха, чим!
Ак çак вăрă хаклă мар.
Акса хур та кĕтсе лар!
Хăех ӳсет, ан кулян!
Шăвармашкăн кирлĕ мар-
Сывлăмпа та çырлахать
Çумламашкăн кирлĕ мар
Çума хăех пĕтерет.
**Пурте:** Пире çак тивĕçтерет те!
**Агриппина Иванна**: Атя, пар пĕр пачкине\
(Сутуçă парать
**Сутуçă**: Сывă юлăр! Кайса акăр, Эп каланине ан манăр!

**Шăши**(карчăкран вăрра илет) Атя, карчăк, çĕр чавма,
Çĕнĕ çимĕçе лартма.
Мĕн вăрри илтĕн-ха эс?
**Агриппина Иванна**: Мĕн вăрри? Эп пĕлмес
**Куçук:** Ну-ка, вуласа пĕлес.
Пирĕн чĕлхепе çырман.
Вăрă килнĕ аякран.

**Шăши:** Манюк, кил-ха, вула-ха. Ют чĕлхе тĕпчен шкулта.
**Манюк**( аран вулать)
Мад-ин Чина,- тет кунта
**Михал Палччă**: Чаплă çимĕç пулмалла!
**Шăши:** Атя, васкар пахчана!
**Манюк:** Ман халь урок тумалла!
(Хăлхине наушник чикет те юрласа тухса каять)
**Маçук**: (тутлăн карăнса, çăварне карса)
Ман сунара каймалла!
**Куçук**: Çурт-йĕре сыхламалла(хаçатне йăтса тухса каять)

Михал Палччă: Пулă çырмара хыпать!

Каймасан ыйхă килмест!

(вăлтине йăтса тухса каять)

**Агриппина Иванна:** Ман сериал пуçланать ( Питне массаж туса утать)

**Шăши:** Апла ман акас пулать

(Шăши çĕр чавса акать, шăварать. )Хĕвел тухать

**Хĕвел**: Юратмастăп çуллана

Ялан ирех тăмалла,

Çĕр питне ăшăтмалла,

Кунĕпех çутатмалла.

Пĕрисем ирех вăраннă

Пахчине аван шăварнă.

Типĕтем-ха эп ăна-

Ан тăччăр манран малтан.

**Агриппина Иванна** (пуçне ал шăллипе çыхнă, аллинче шыв витри. Сапма тăрать. Ансăртран çимĕçе курать)

Çимĕç лартнă-ха кунта-

Шутламан-ха шăварма!

Килти пĕтĕм япала

Мана кирлĕ пулмалла! (Витрери шывне çимĕç çине сапать)

**Манюк** музыка кĕрлеттерсе тухать. Пахчари çимĕç патĕнче чăхсене асăрхать. Хăвалать

**Манюк:** Çимĕçне хăйсем акаççĕ

Сыхламашкăн тăрăшмаççĕ.

Килти пĕтĕм япала-

Мана кирлĕ пулмалла. (тухса каять)

Çумăр пĕлĕчĕ килет

**Сумăр пĕлĕчĕ**: Вĕçсе килтĕм васкаса,

Парам-ха сире çуса:

Пысăк ӳсчĕр çимĕçсем,

Курăксемпе чечексем.

Шăмă йăтнă Куçук килет. Унталла-кунталла пăхать. Шăмă пытарма вырăн шырать. Çимĕç патĕнче чарăнать. Ун айне чавса пытарать.

**Куçук:** Ку халь мĕнле япала?

Камăн кăпкалатмалла?

Килти пĕтĕм япала-

Мана кирлĕ пулмалла.

(Шăммине пытарать те каять)

Пысăк çарăк ӳссе ларать. Михал Палччă пулăран килет.

Шăмă йăтнă Куçук килет. Унталла-кунталла пăхать. Шăмă пытарма вырăн шырать. Çимĕç патĕнче чарăнать. Ун айне чавса пытарать.

**Куçук**: Ку халь мĕнле япала?
Камăн кăпкалатмалла?
Килти пĕтĕм япала-
Мана кирлĕ пулмалла.
(Шăммине пытарать те каять)

Пысăк çарăк ӳссе ларать. Михал Палччă пуларан килет.
**Михал Палччă:** Ак Ку мĕнле япала
ӳссе ларнă пахчара? (Куçлăхне тăхăнса пăхать)

Çарăк вĕт ку, тупата,
Шутламаç те кăларма.
Килти пĕтĕм япала
Мана кирлĕ пулмалла!
Çарăк, тух, сана калатăп

**Çарăк:** çук, тухмастăп. Вăтанатăп.

**Михал Палччă**: Çиччас арăма калатăп (Арăмне чĕнет) Арăм, кил-ха кунта. (Арăмĕ кĕрет
**Михал Палччă:** Кур-ха, мĕскер ӳссе ларнă?
**Агриппина Иванна**: « МадинЧина» ӳснĕ вĕт!
Пуянлăх пире кĕтет!
**Михал Палччă:** Аха, «Мадинчина» (пăхкалать, ĕнсине хыçать)
«Çарăк» ятлă чăвашла
**Агриппина Иванна:** Чăнах та!
**Михал Палччă:** Халь кăлар пуянлăхна!(Шăхăркаласа тухса каять)

**Агриппина Иванна:** (çарăка пӳрне вĕçĕсемпе турткаласа пăхать)
Пурпĕрех вĕт кăларатăп,
Чăннипех сана калатăп.

**Çарăк:** Çук, тухмастăп. Ан кăтăкла!
**Агриппина Иванна:** Манюк, тух-ха хăвăртрах.
**Манюк:** Эп халь урок тăватăп,
Вара урайне шăлатăп.
Эсĕ чĕн-ха Маçука е Куçука.

**Агриппина Иванна:** Юрĕ, Манюк, ан килсем
Юлăн эс помадăсăр!
Манюк чĕрне сăрласа тухать.
**Манюк:** Мансăр ним те тăваймаççĕ!
(çарăк патне пырать, туртса пăхать):
Çарăк, тух! Сана калатăп
Çарăк, тух! Сана сăрлатăп!

**Çарăк**: Çук, тухмастăп! Варланатăп!
Куçук! Кил-ха, Хăналатăп!

**Куçук:** Эп çиччас, çиччас. Васкатăп

**Манюк:** Тăпăлтар-ха çарăка-
Вара çитерĕп сана  яшка(Каять)
**Куçук:** Çарăк, тух. Сана  вăрçмастăп.
**Çарăк**: Кунтах лайăх, эп тухмастăп.
**Куçук**: Маçук, хăвăрт кил кунта!
**Маçук**: Мĕн тума?
**Куçук**: Сана вискас эп парасшăн!

**Маçук**: Ну, юрать, апла пыратăп (Куçук патне чупса пырать, йăпăлтатать)
**Куçук:** Улталарăм эп сана!
Ну-ка, кăлар çарăка!
(Чышкине кăтартать те тухса каять)
**Маçук** (тарăхса): Çарăк, тух, сана калатăп
**Çарăк:** Çук, тухмастăп! Эп хăратăп!
**Шăши килет:** Кам ĕçлетĕр-ха çапла!
Михаç, кил часрах кунта
Ярса тыт эс çарăкран!
(Агриппина Иваннăна)
Эсĕ тыт упăшкунтан,
Манюк, тыт кукамунтан,
Куçук! Уйрăл эс хаçатунтан
Хытăрах тыт Манюкран,
Маçук, эсĕ Куçўкран.
Эпĕ тытăнăп санран!
Туртăр халь пĕтĕм вăйран!

**Пурте:** Пĕрре, иккĕ, виççĕ! (çарăка туртса кăлараççĕ)

**Шăши**: Сирĕн ĕнтĕ пĕлмелле – алăпа ĕçлемелле! (Аллисене силлекелесе кăтартать)
Пурте:  Сăмаха вĕçтернипе
Ĕç тухмасть вăл ниепле!